Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

13 (7867) № ✻Ытлари кун, 2011 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 22-мĕшĕ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ыран – Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ

Пирĕн тимлĕхе тивĕç вĕсем

Ыран эпир кашниншĕнех питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ те паллă уява – Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунне – паллă тăватпăр. Çакă вăл салтак службине кайма хатĕрленекенсемшĕн те, службăра тăракансемшĕн е унтан таврăннисемшĕн те, тĕрлĕрен хĕрӳ точкăсенче хăйсен салтак тивĕçне пурнăçланă çар çыннисемшĕн те пĕлтерĕшлĕ кун пулса тăрать. Апла пулин те ытларах эпир ăна чи малтанах Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннисемпе, çĕр-шыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн вăрçă хирĕнче пуçĕсене хунисемпе, Аслă Çĕнтерӳ кунне тылра ырми-канми ĕçлесе çывхартма пулăшнисемпе çыхăнтарма хăнăхнă. Çавна май ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕпе Нина Пантелеевна ПЕТРОВĂПА тĕл пулнă май вăрçă участникĕсене патшалăх енчен пулăшупа тивĕçтересси районта епле пулса пыни пирки кăштах каласа пама ыйтрăм.

– Шел пулин те, вăхăт иртнĕ май вăрçă участникĕсен, ветеранĕсемпе инваличĕсен шучĕ чаксах пырать. Паянхи куна районта вăрçă участникĕсемпе инваличĕсем 104 çын пурăнать, тĕрлĕ çапăçусене хутшăннă ветерансем 370-ĕн. Вăрçăра вилнĕ салтак мăшăрĕсем 396 çын.

Патшалăх вăрçă участникĕсемпе вилнĕ салтак мăшăрĕсене пулăшасси çине пысăк тимлĕх уйăрнине палăртнă пулăттăм. «Ветерансем çинчен» Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн федераллă çăмăллăхсемпе усă кураксене уйăхсерен пенси çумне Пенси фончĕ урлă хушса тӳлеççĕ, соцпакетпа тивĕçтереççĕ. Соцпакетпа усă курма кăмăл туннисене укçан хушса параççĕ. Социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă та пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă çăмăллăхсемшĕн уйăхсерен хушма тӳлевсем палăртнă.

Калăпăр, вăрçă инваличĕсем, инвалида тухнă вăрçă участникĕсем, вăрçă участникĕсем соцпакетпа усă кураççĕ пулсан уйăхсерен 2691 тенкĕ те 70 пуса, соцпакетпа усă курмаççĕ пулсан 3396 тенкĕ те 80 пуса, кунсăр пуçне социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă 345 тенкĕне тивĕççĕ. «Жителю блокадного Ленинграда» знак илнисене вара соцпакетпа усă кураксене 1163 тенкĕ те 80 пус, соцпакетпа усă курман чухне 1868 тенкĕ те 90 пус параççĕ, социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă – 345 тенкĕ.

Кунсăр пуçне ытти çăмăллăхсем те пăхса хунă. Акă юлашки вăхăтра патшалăх вăрçă участникĕсемпе тăлăх салтак арăмĕсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене тивĕçлĕ шая çитерессипе сахал мар тăрăшать. Чăннипех те тивĕçлисене хваттерсемпе тӳлевсĕр тивĕçтерме пăхса хунă. Паянхи куна çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатассипе 196 çынна черете тăратнă. Вĕсенчен 147-шĕ свидетельствăсем, 134-шĕ хваттер уççисем илнĕ те ĕнтĕ.

Çавна та каласа хăварасшăн. Хваттерсемпе тивĕçтерни, укçа-тенкĕ тĕлĕшпе пулăшни питĕ лайăх. Чăннипех тивĕç вĕсем ăна. Анчах та вăрçă ветеранĕсем тĕлĕшпе хамăрăн кулленхи тимлĕх, ыр кăмăллăх, ăнланулăх, сăпайлăх пирки те манар мар. Хăш чухне вĕсене ырă сунса сăмах хушни те тем пекех паха.

В. ШАПОШНИКОВ
каласнă.

Сăн ӳкерчĕкре: Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин вăрçă участникне – Гагарин урамĕнче пурăнакан Алексей Капитонович Капитонова – хваттере тивĕçнĕ ятпа саламлать. Ветеран вăрçăн пĕрремĕш кунĕнчен тытăнсах фронтра пулнă, Сталинград патĕнчи çапăçусене хутшăннă, аманнă. Мăшăрĕпе Анастасия Ефимовнăпа 3 ывăл пухса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Ветеран çывăх вăхăтрах хăйĕн 90 çулхи юбилейне паллă тума хатĕрленет.

Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Уяв ячĕпе, хӳтĕлевçĕсем!

Ыран пирĕн çĕр-шыв чаплă уяв – Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунне – паллă тăвать. Сумлă салтаксене хисеплесе, вĕсене асра тытса тĕрлĕ вырăнта обелисксем, палăксем мăнаçланаççĕ, сӳнми çулăмсем ялкăшаççĕ...

1941 – 1945 çулсенчи хӳтĕлевçĕсем – пирĕн аттесем, асаттесем – ниме пăхмасăр Тăван çĕр-шывăн ирĕклĕхĕшĕн çапăçнă, пуç хунă. Акă Муркаш районĕн мухтавлă ывăлĕсемпе те эпир тивĕçлипех мăнаçланатпăр: Совет Союзĕн 5 Геройĕ тата Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ пур вĕсем хушшинче.

Паян эпир Совет Союзĕн тата Раççей Çарĕнче хĕсметре тăнă тата халĕ тăракансене те чыслатпăр. Салтак тивĕçне Афганистан çĕр-шывĕнче пурнăçланисен харсăрлăхне те манас çук. Муркашри Çар комиссариатĕнчен 111 салтак çĕр-шыв хушăвне пурнăçлама сăртлă-туллă Афганистана тухса кайнă. Шел те, вĕсенчен 7-шĕ киле таврăнайман.

Çурçĕр Кавказри, Таджикистанри хĕрӳ çапăçусене те хутшăнма тиврĕ пирĕн салтаксен. Хастар çамрăксем Раççей Федерацийĕн орденĕсемпе медалĕсене тивĕçсе чăваш салтакĕн ятне ямарĕç. Раççей Геройĕсен Евгений Борисовпа Николай Смирновăн хастарлăхĕ районти кăна мар, республикăри пур çамрăкшăн та витĕмлĕ тĕслĕх вырăнĕнче.

Паянхи кун вара тĕнчере хĕç-пăшаллă конфликтсем тухма пултарас хăрушлăх ӳссех пырать. Раççейĕн Хĕç-пăшаллă вăйĕсенче пыракан реформа Раççей салтакĕсемпе офицерĕсенчен пысăк ăсталăх ыйтать.

Чăваш Республикин Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен пайĕнчен пĕлтĕр çамрăксем палăртнă чухлех хĕсмете кайрĕç. Вĕсем Камчаткăран пуçласа Калининграда çити, Мурманскран пуçласа Çурçĕр Кавказ таранах вырнаçнă çар чаçĕсенче патшалăх умĕнчи тивĕçе пурнăçлаççĕ. Вĕсен командирĕсенчен пирĕн пая Тав çырăвĕсем килни Муркаш тата Элĕк каччисем паян аслашшĕсен, ашшĕсен ятне яманнине çирĕплетет.

Салтаксен хисеплĕ ашшĕ-амăшĕ, тавах сире хастар ывăлсем ӳстернĕшĕн!

Хисеплĕ ветерансем, çар çыннисем, хĕрӳ çапăçусене хутшăннисем, хĕсметре тăнисем! Сире пурне те Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕпе саламлатăп. Телей, тăнăçлăх тата сывлăх сунатăп.

В. АНДРЕЕВ,
Чăваш Республикин Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсен пайĕн пуçлăхĕ.

МУРКАШ РАЙОНĔН ХИСЕПЛĔ ÇЫННИСЕМ!

Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ – хăюллă тата çирĕп кăмăллă арçынсен уявĕ – ячĕпе пурсăра та пĕтĕм чĕререн саламлатăп.

Пирĕн пурнăçра чи хакли вăл – туслăх, тăнăçлăхпа йĕркелĕх. Ахальтен мар ĕнтĕ Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçисен кунĕн историйĕ те пуян та мухтавлă. Уява епле ят парсан та вăл хăюлăхпа, паттăрлăхпа, кăмăл çирĕплĕхĕпе, чыслăхпа çыхăннă.

Сире сывлăх, ăнăçу, телей, ыранхи кунхи шанчăклăх тата малашлăхра çутă ĕмĕтсем, кăмăл çирĕплĕхĕ, пултарулăх хавхаланăвĕ тата тапса тăракан энерги сунатăп.

Н. БУДАРИН,
РФ Патшалăх Думин депутачĕ, Раççей Геройĕ, космонавт летчик.

ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!

Сире Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕпе саламлатăп!

Кашни çыннăн таса тивĕçĕ – хăйĕн çĕрне-шывне сыхласси. Йывăр çулсенче Тăван çĕр-шыва хӳтĕлеме пĕр çын пек тăнă салтаксемпе офицерсен виçесĕр паттăрлăхĕ, çирĕплĕхĕ ăруран ăрăва куçса пырать. Вĕсем паянхи çамрăксенче те патриотизм туйăмне вăйлатаççĕ. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин паттăрĕсем умĕнче эпир паян çĕре çити пуç таятпăр. Тĕлĕнмелле вăйхăватпа вĕсем фашизма ура хурса тĕнчене пусмăртан сирсе миллионшар çынна мирлĕ пурнăç туса пачĕç.

Çулсеренех çак кун кашни çемьерех çĕр-шыври тăнăçлăхпа канлĕ пурнăçшăн, хăрушсăрлăхпа ыранхи кун шанчăклăхĕшĕн мир хуралĕнче тăнă асаттесемпе аттесене, пиччесемпе шăллăмсене, упăшкасемпе ывăлсене уявпа саламласа тав тăватпăр. Паянхи çамрăксем аслă ăрусен патриотизм йĕркине алăран вĕçертмесĕр патшалăхăн шанчăкĕ пуласса шанатпăр.

Тăван çĕр-шыва юратни, ун умĕнче яваплăха туйни, республика интересĕсемшĕн тар тăкса ĕçлени Чăваш енĕн çутă малашлăхĕпе тачă çыхăннине пурте ăнланнине ĕненетĕп. Çавăнпа та пурне те телей, сывлăх, çĕнĕ ӳсĕмсем тума вăй-хал сĕнетĕп!

Чăваш Республикин Президенчĕ М. ИГНАТЬЕВ.

ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ!

Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсем, вăрçăн йывăр çулĕсене чăтса ирттернĕ тыл ĕçченĕсем, мирлĕ вăхăтрах çапăçусене хутшăннă салтаксем, çара кайма хатĕрленекен çамрăксемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсем!

Сире пурне те Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çак уяв вăл Тăван çĕр-шыва юратакансен, унăн мирлĕ пурнăçĕпе лăпкăлăхне сыхлакансен паттăрлăхпа хăюлăх уявĕ. Çĕр-шыва хӳтĕлесси – пирĕн çĕр-шыври кашни çыннăн чыслă та хисеплĕ тивĕçĕ. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче çĕнтерӳ тунă ветерансемпе тыл ĕçченĕсем умĕнче эпир ĕмĕрĕпех парăмра. Пире вĕсем мирлĕ те телейлĕ пурнăç парнелерĕç, вăрçăпа юхăннă Тăван çĕр-шывăмăра ура çине тăратас ĕçре ырми-канми вăй хучĕç. Паян та вĕсем çитĕнекен ăрăва патриотла воспитани парас ĕçе хутшăнаççĕ, çамрăксем вĕсенчен тĕслĕх илсе ӳсеççĕ. Паянхи çамрăксем аслă ăру çыннисен ĕçне малалла тăснине, Тăван çĕр-шывăмăр паян та шанчăклă алăра пулнине çар конфликчĕсене хутшăннисен паттăрлăхĕ те çирĕплетсе парать. Афган вăрçинче те, ытти вĕри точкăсенче те пирĕн салтаксем çĕр-шыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçларĕç. Паттăр ывăлсем çитĕнтернĕ салтак амăшĕсен умĕнче эпир çĕре çити пуç таятпăр.

Çĕр-шыв тĕрекĕ, унăн пуласлăхĕ пирĕнтен кашниченех килет. Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Д.А. Медведевăн Указĕпе килĕшӳллĕн 2011 çул Раççей космонавтикин çулталăкĕ шутланать. Çакă пире тĕнче уçлăхне пĕрремĕш çĕкленекенсем пекех хамăр ĕçре кашнинех малта пымалли, кашнин хăйĕн ĕçĕнче пултаруллă пулмалли çинчен калать. Хамăрăн тăрăшуллă ĕçпе район, республика, Раççей çирĕплĕхĕшĕн тимлемелле, пĕрле пĕр тĕллевпе вăй хумалла пирĕн. Чăваш Республикин Президенчĕ М.В. Игнатьев Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче палăртнă пек, пирĕн çамрăксене шанмалла, вĕсене хăйсен пултарулăхне пурнăçа кĕртме çулĕсене уçса пымалла. Ачасене мĕн пĕчĕкренех аслă ăрури паттăр салтаксен ырă тĕслĕхĕ çинче воспитани парассине тĕпе хумалла. Вĕсем çĕр-шыва хӳтĕлеме юрăхлă çынсем пулса ӳсчĕр тесе тăрăшмалла, çак ĕçе вăйлатмалла. Тăван çĕр-шывăн пуласлăхĕ, çирĕплĕхĕ хăйсенчен кашниченех килнине мĕн пĕчĕкрен ăша хывса ӳстермелле.

Сирĕн пурин те сывлăхăр çирĕп, кун-çулăр вăрăм та телейлĕ пултăр. Ĕçĕрсем ăнса пыччăр. Çемьере килĕшӳпе юрату, тату пурнăç хуçалантăр.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ
Ю. ИВАНОВ.

Саламлатпăр

Хаклă та юратнă çыннăмăра – Муркашра пурăнакан **Людмила Димитриевна КРЮЧКОВĂНА** 50 çул тултарнă ятпа чунчĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăхпа вăй-хал, тату пурнăçпа ăш пиллĕх сунатпăр. Телейпе ăнăçу яланах санпа пĕрле пулччăр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр. Татах та нумай çул пурăнма Турри чир-чĕртен сыхлатăр, телей парнелетĕр.

Саламлатăп: Крючковсен, Васильевсен, Семеновсен, Даниловсен çемйисем.

Юратнă çыннăмăра – Юнкăпуç ялĕнче пурăнакан **Людмила Ивановна ЯНДИМИРОВĂНА** 70 çул тултарнă ятпа чунчĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăй-хал сунатпăр. Пире пулăшса пынăшăн, пирĕнпе яланах ырă кăмăллă пулнăшăн тав тăватпăр. Татах нумай çул таса сывлăхпа пире савăнтарса пурăнма Турри пиллĕх патăр сана.

Пысăк саламлатăп: ывăлĕпе кинĕ, 2 хĕрĕпе кĕрӳшĕсем, 5 мăнукĕ, таванĕсем.

Шурча шкулĕнче нумай çул вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ хисеплĕ **Федор Васильевич САВЕЛЬЕВА** – ĕçпе вăрçă ветеранне – февралĕн 25-мĕшĕнче 90 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр, çирĕп сывлăх сунатпăр, малашне те шкулпа туслă çыхăну тытасса шанса тăратпăр.

Саламлатăп: Шурча шкулĕнчи вĕрентекенсемпе вĕренекенсем.

Шухăшсем тата фактсем

(Хресчен реформи пуçланнăранпа 150 çул çитнĕ май)

Истори страницисем

Историре 19-мĕш ĕмĕрĕн 1861 çулчченхи тапхăрне (1801–1861 ç.ç.) «реформăчченхи» çулсем теме хăнăхнă. 1861 çул хыççăнхи тапхăра вара «реформа хыççăнхи» çулсем теççĕ. Ку вăл, паллах, 2-мĕш Александр патша крепостла правăна пăрахăçлани çинчен калакан Положенипе Манифеста алă пусса çирĕплетнипе çыхăннă. Çак ĕç пулса иртнĕренпе кăçалхи мартăн 3-мĕшĕнче (кивĕ стильпе февралĕн 19-мĕшĕнче) 150 çул çитрĕ.

Паллă ĕнтĕ, 2-мĕш Александр патшара ларнă вăхăтра (1855–1881 ç.ç.) палăрăмлă ытти либераллă реформăсем те кун çути курнă. Вĕсене историре «аслă реформăсем» теççĕ. Вăл шутра Финанс реформи (1860 ç.), Земство реформи (1864 ç.), Суд реформи (1864 ç.), Халăха вĕрентес ĕç реформи (1863–1864 ç.ç.), Çар реформи (1861–1871 ç.ç.), Хуласен хăй тытăмлăх реформи (1870 ç.). Çапах та реформăсенчен чи пĕлтерĕшли хресченсене ирĕке кăларса граждан прависемпе тивĕçтерни пулнă. Ахальтен мар 2-мĕш Александр халăх асĕнче «Ирĕке кăларакан» («Освободитель») ятпа юлнă.

Пĕлетпĕр ĕнтĕ, вăл вăхăтра çĕр-шывăн тĕп отраслĕ ял хуçалăх производстви шутланнă. Раççей империйĕнчи халăхсен йышĕ 40-е яхăн çул хушшинче 74 миллионран (1858 ç.) 126,4 миллиона çитнĕ пулсан, 16,7 миллионĕ кăна хула халăхĕ пулнă. Уес хулисенче вара кунта пурăнакансен 30–60 проценчĕ таран çĕр ĕçĕпе пурăннă, вылăхчĕрлĕх тытнă.

Чăваш Республикин хальхи территорийĕнче крепостла правăна пăрахăçланă вăхăталла 323 пине яхăн çын (71,6 проц.) патшалăх хресченĕ шутланнă, 90 пин ытларах (20,1 проц.) удел хресченĕ пулнă. Вăл шутран ытларахăшĕ – чăвашсем. Помещик аллинчи хресченсен шучĕ вара 37 пин çын ытларах (8,3 проц.) пулнă. Кусем пурте тенĕ пекех вырăссем (Етĕрне, Çĕрпў, Улатăр, Шупашкар уесĕсенчен) пулнă. Çапла майпа 2-мĕш Александр 1861 çулхи февралĕн 19-мĕшĕнче алă пусса çирĕплетнĕ хресченсем çинчен калакан Положенипе Манифест çав вăхăтра пирĕн тăрăхри 8 процент ытларах хресчене çеç тўрремĕнех пырса тивнĕ. Вĕсене текех «хуçисем» сутса е картла выляса яма, ирĕксĕр авлантарма е качча пама, хĕнеме, хăйсем тĕллĕн суд тума пултарайман. Удел тата патшалăх хресченĕсем унченех ирĕклĕ шутланнă, çĕнĕ çĕр йĕркелĕвĕ вара кун йышши хресченсем хушшинче 1863 çулхи Положенипе килĕшўллĕн тата 1866 çулхи саккунпа пăхнă тăрăх тин пурнăçа кĕме пуçланă.

Кĕскен калас пулсан ку вăл çĕр пайĕсем (наделĕсем) хресчен аллине куçса вĕсен харпăрлăхĕ пулса тăмалли йĕрке пулнă. Процесс 49 çул таран тăсăлма пултарнă. Патшалăх хресченĕсемшĕн – 44 çул таран. Хресченсен ытларах пайĕ çĕршĕн тўлемелли парăма çак йĕркене пăрахăçличчен те (1907 ç.) парса татайман. Парăмри хресченсен пурнăçĕ вара реформăчченхи йĕркесенчен нумаях улшăнса тăман. Нумайăшĕ йывăрлăхсене чăтаймасăр хăйсен пай çĕрĕсене пăрахса хулана пурăнма туха-туха кайнă. Анчах ун пек тума 1861 çул хыççăн 9 çул иртсен кăна юранă. Ĕç-пуçа ялпа (община йĕркипе) татса памалла пулнă. Çапах та 1861 çулта пуçланнă хресчен реформи çĕр-шывăн малашнехи аталанăвĕшĕн питех те прогрессивлă пулăм шутланать.

Пирĕн тăрăхри хресченсем ку реформăпа килĕшўллĕн ят çĕр пуçне вăтамран 5,4 гектар акмалли çĕр хуçисем пулса тăнă. Паллах, çĕрпе ытларах экстенсивлă майсемпе кăна усă курнă. Хресченсем «чухăннисем», «вăтаммисем» тата «пуяннисем» çине пайланса каясси те (тепĕр майлă ялти капитализмла хутшăнусем) çак реформăранах пуçланнă.

20-мĕш ĕмĕр пуçламăшнелле Раççей экономики тĕнчере малти вырăнсене тухни те çак реформăсемсĕр пулайман пулĕччĕ. Ку вăл тĕнчери аталаннă çĕр-шывсен опычĕпе практикиех пулнă, анчах та Раççейре каярах юлса пуçланнă тата питĕ вăрах тăсăлнă. Çапах та ўсĕм хăй тĕллĕн килмен, паллах. Апла пулсан патша чиновникĕсем, земство пухăвĕсемпе управисем, общественноç алă усса ларнă теме çук. Ун чухне Раççейре парламентаризмпа политика партийĕсем пулман тетпĕр пулин те.

Вăл вăхăтри мал курăмлă çынсем хушшинче çак пулăмсемпе çитменлĕхсене ăнланакансем пулман мар. Сăмахран, пирĕн ентеше, чăвашсен пĕрремĕш профессорне Н.В. Никольские илес пулсан, вăл çĕр ĕç культурипе питĕ интересленнĕ, сад ăсти пулнă, вĕллесем тытнă. Унăн иккĕмĕш аслă пĕлĕвĕ шăпах экономика тата управлени пĕлĕвĕсемпе çыхăннă пулнă, ку енĕпе те вăл питĕ нумай ĕçленĕ.

И.Я. Яковлевăн пĕрремĕш специальноçĕ вара çĕр виçекен (землемер) пулнă. Çав вăхăтра вăл 18 çулта кăна пулнă. 21 çула кайсан вара Иван Яковлевич хăйĕн шкулне уçать (1868 ç., октябрь). Ун чухне вăл хăй те вĕреннĕ кăна-ха.

Çапла тума ăна шăпах ĕнтĕ 2-мĕш Александр реформисенчен пĕри – Вĕрентў реформи – май парать. Паллах, ăна пулăшакансем те пулман мар. Сăмахран, унăн аслă юлташĕ тата учителĕ вырăс çынни Н.И. Ильминский. Ахальтен мар ăна И.Я. Яковлев хăйĕн чăваш халăхĕ валли хăварнă Халалĕнче те (1921 ç.) ырăпа асăнать.

Чăвашсен çĕнĕ алфавичĕпе букварĕн авторĕ, çур ĕмĕр ытла учительсем хатĕрлес ĕçе тўрремĕнех хутшăнса йĕркелесе пынă Аслă вĕрентекен хресченсем çинчен те шухăшламан мар, паллах. Ахальтен-и Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен учитель пулса тухакансене вĕрентў программипе килĕшўллĕн ал ĕçĕсене, çĕр ĕçне, пахчапа сад ĕçне, хурт-хăмăр пăхас ĕçе, хăмла туса илессине, вылăхчĕрлĕх ĕрчетес ĕçе те вĕрентнĕ. Çавна валли шкулăн 300 гектар çĕр, ферма, мастерскойсем, тимĕрçĕ лаççи пулнă. Хушма тупăш панипе пĕрлех çакă пулас учительсене хресчен ĕçне лайăхрах ăнланма, хаклама, çĕр-аннене юратма вĕрентнĕ. Çавăнпа пĕрлех ял хуçалăхĕнчи çĕнĕ технологисене алла илме, çĕнĕлле ĕçлеме хăнăхса пыма хистенĕ.

Паллă ĕнтĕ, ялти учительсем хăйсен килти хушма хуçалăхĕсене тытса пырас ĕçре (вăл шутра сад, пахча, хурт-хăмăр ĕçĕсенче те) ыттисемшĕн ырă тĕслĕх шутланнă. Нумайăшĕ вĕсенчен вĕренсе пынă. Çапла пурнăçа кĕрсе пынă Иван Яковлевичăн мал курăмлă ĕмĕчĕ. Çак ĕмĕтсем И. Яковлевăн яш чухнех аталанса вăй илнĕ. Вăл вăхăтри «народниксен» шухăш-кăмăлĕсемпе çамрăк интересленнех, паллах. Анчах та вăл халăха пулăшас текенсен терроризм çулне мар, бунтарство çулне те мар, пропагандăпа агитаци çулне, халăха вĕрентес çула суйласа илнĕ. И.Я. Яковлевăн йывăрлăхсене нумай чăтса ирттерме тивнĕ пулин те, хăйĕн ĕмĕчĕсене ĕмĕр тăршшĕпех ăнăçлă пурнăçа кĕртсе пынă.

Хăйĕн чăваш халăхĕ валли хăварнă Халалĕнче вăл вĕренсе çутта тухнă чăвашсене уйăммăн чĕнсе калать. Сирĕн тăван халăха «лăпкă та мирлĕ ĕçпе» пурăнма условисем туса парас ĕçе хăвăр çине илмелле, уншăн тĕслĕх вырăнĕнче пулмалла. Халăхра наука пĕлĕвĕсене сармалла, гражданлăх ăнлавне аталантармалла, саккунлăхпа правăна вĕрентмелле, тет. Шанчăка, чи малтанах Турра ĕненнине, çухатмалла марри çинчен, вырăс тата ытти халăхсемпе килĕштерсе пурăнмалли çинчен аса илтерет.

В. ФЕДОРОВ.

(Вĕçĕ çитес номерте).

Февралĕн 23-мĕшĕ – Тăван çĕр-шыв хўтĕлевçисен кунĕ

«Виççĕмĕш хут кайма та хирĕç мар»

– Арçыннăн яланах хўтĕлевçĕ пулмалла. Çемьене, Тăван çĕршыва, мирлĕ халăха хўтĕлемелле. Вĕсен лăпкă пурнăçĕшĕн тăрăшмалла. Акă эпĕ милици ĕçченĕ пулнă май Чечен Республикинче икĕ хутчен пултăм. Эпĕ унта виççĕмĕш хут кайма та хирĕç мар. Паллах, çывăх çынсенчен уйрăлма питĕ йывăр. Ют тăрăхра тăтăшах вĕсем пирки шутлатăп.., – терĕ Станислав Григорьевич Филиппов тин кăна Чечен Республикинчен килнĕскер. Унта вăл июлĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 28-мĕшĕччен пулчĕ, Çĕнĕ çула тăван килте кĕтсе илме çитрĕ.

Станислав Григорьевич контртеррористла тата ятарлă ытти операцисене хутшăнать, хăюлăхпа паттăрлăх кăтартать. Вăл 3 преступлени тупса палăртать. Вĕсем тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçарнă. Икĕ преступленийĕ автотранспорт шыравĕпе çыхăннă.

– Паянхи пекех астăватăп-ха çав вăхăтсене. Ноябрĕн 27-мĕшĕнче «Кизляр – Грозный» çулĕ çывăхĕнче Терек шывĕ урлă каçакан кĕпер çинче пĕр автомашинăна тĕрĕслеме тиврĕ. Унăн водителĕ йĕркене пăсни палăрчĕ. Çав вырăнтах «Опел» машинăна чартăмăр, документсене тĕрĕслерĕмĕр. Çак автомашина федераллă шыравра пулни палăрчĕ. Çапла вара Станислав Григорьевича хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Чечен Республикин Хисеп грамотипе чысларĕç. Хавхалантару шучĕпе пĕр пусăм çўлелле хăпартрĕç, милици прапорщикĕ ят пачĕç.

Мĕн пĕчĕкренех Станислав милици çи-пуçĕ тăхăннă çынсене кăмăллана. Вĕсем пек пулма ĕмĕтленнĕ. Çав шухăш вара ăна ўссе çитсен те канăç паман. Çапла вара 2004-мĕш çулта 25 çулхи йĕкĕт хăйĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртнĕ, милици ĕçченĕ пулса тăнă. Ĕçтешĕсенчен лăпкă мар ĕçе çăмăллăнах хăнăхса пынă, аслисенчен тĕслĕх илнĕ. Кирек епле йывăр лару-тăрăва та çĕнтерме хал çитернĕ.

Йĕрке пăсакансене çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупмасăр сыхламалли те пулнă Станиславăн. Юрать-ха çумра çур сăмахран ăнланакан мăшăрĕ тата чун уççи – ачисем пур. Вĕсем йăлтах каçараççĕ, яланах тăван килте кĕтеççĕ. Паллах, çывăх çынна аякри тăрăха ăсатма ытла та йывăр вĕт.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Конкурс

«Эпĕ – атте, ку – яланлăха!»

Çак ятпа районти хĕрарăмсен канашĕ йышăннипе сăн ўкерчĕксен конкурсĕ иртет. Унта 1 е ытларах ачаллă ашшĕсем хутшăнма пултараççĕ. Çемьепе пĕрле ўкерĕннĕ 3 сăн ўкерчĕк, хăйсем çинчен тата ачисем çинчен çырнă калава район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕн пайне çитермелле. Сăн ўкерчĕксене электронлă майпа çак адреспа ярса памалла: culture@morgau.cap.ru.

Тăван çĕр-шыв хўтĕлевçин кунне халлланă конкурс февралĕн 25-мĕшĕччен иртет. Хутшăнма васкăр!

Район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕн пайĕ.

Объявление

В объявлении собственников земельных долей, о выделении земельного участка в счет земельной доли, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, опубликованного в районной газете «Çĕнтерў ялавĕ» от 27 ноября 2010 года в №№ 99-100 (7841-7842), страница 5, в 3 колонке, в 3, 4 абзацах допущена опечатка, вместо «ул. Ленина, д 41/5 офис ООО «Аршин» следует читать «ул. 50 лет Октября, д. 4 офис ООО «Земля».

Вулакан пултарулăхĕ

Уяв ячĕпе, арçынсем!

Шур çўçлĕ ватă салтаксем,
Фашизма çĕнтернисем,
Салам, паян, салам, чунран,
Салтак ятне çўл тытнисем!
Сире уявпала пурне:
Афган, Чечен геройĕсем
Çаваллă вилĕм карчăкне
Куçран куçа чăрр пăхнисем!
Эп саламлатăп туссене,
Салтак пăтти пĕр хуранран
Ир-каç ик çул çинисене:
Уявпала пур кăмăлтан!
Куç хупнă паттăр туссене
Ялан чунра, асра тытса
Паян пĕр шухăшлă пулса
Чыслар тайса кăшт пуçсене...
Çарта кам пулнă, вăл пĕлет:
Салтак пăтти вăй-хал кўрет.
Салтак ятне çўле çĕклет,
Çартан киле АРÇЫН килет!
Çулсем иртсен те пурнăçра
Яшах юлар-и чунсемпе?
Салтак юрри ЧĂН УЯВРА
Юрлар пĕрле, ЧĂН АРÇЫНСЕМ!

Игорь МАЙКОВ.

Кашмаш.

«Терминалпа» çурт тăватпăр

Эпир пурте кăштах строительсем. Анчах, килĕшсемĕр, профессионалсен пулăшăвĕ нихăçан та ытлашши пулмĕ. Эрнесерен тухакан канашсен ярăмне пичетлеме пуçлатпăр, вĕсенче Шупашкарти «Терминал» суту-илў комплексĕн специалисчĕсем пирĕн вулакансене строительство материалĕсене кăна мар, уйрăм çуртпа çыхăннă ĕмĕте пурнăçламалли майсене суйласа илмелли сĕнўсем те парĕç. Çапла вара – 1-мĕш канаш:

Йўнĕрех туян – тўлевсĕр упра!

Хĕлле строительство организацийĕсем кăна çурт-йĕр тăваççĕ. Вĕсен объекта хута ямалла, рабочисене шалу тўлемелле – унсăрăн тарса пĕтĕç, техникăна ĕçлеттермелле... Пĕр сăмахпа, хĕлле çурт-йĕр çĕклени хаклă, анчах çĕклемени, ахаль ларни, тата хаклăрах.

Уйрăм çынна çăмăлрах – вăл çулла çурт-йĕр тăвать. Анчах... Строительство ĕçĕсем çуллахи уйăхсенче анлă сарăлнине пĕлнĕ май **стройматериалсем** кăларакансем **нарăсрах ерипен, çуркунне вара тăруках, 40 – 50 процент, хаксене пысăклатаççĕ**. Ку – предприятисен планланă тупăшĕ, ăна, калăпăр, кирпĕч тĕлĕшпе заводсенче ятарласа дефицит туса йĕркелеççĕ. Халăх нумай материал ыйтать, çакă тупăш тума май парать. Çынсен ирĕксĕрех хаклă кирпĕч, газобетон блоксем, ыттине туянма тивет. Хĕллехи сивĕсем çитиччен çурта туса пĕтермелле вĕт – хаклине пăхмасăр...

Ытлашши тăкаксенчен нивушлĕ упранма çук? Пулать! «Терминал» ансат мел сĕнет. Çук, хĕлле стройкăпа аппаланмăпăр – çулла ĕçлĕпĕр, **кирпĕчпе газобетон блоксене вара паянах – йўнĕ чух – туянса хурăпăр**. Упрас тĕлĕшпе чăрмав çук. Туянатпăр та **стройматериалсене çуллаччен кунтах, «Терминалта», тўлевсĕр упратпăр.** Меллĕ тата, чи кирли, йўнĕ!

Терминал ТК кирпĕчпе блоксен питĕ пысăк ассортиментне (500 ытла йышши) сĕнет: **Шупашкар, Канаш çулĕ, 7/1, Алькеш, техобслуживани станцийĕ патĕнче. Тел.: 8(8352)305510, 305515, www.terminaltk.ru.**

«Тивĕçе океанра пурнăçларăмăр»

Çарти служба асран тухмасть

Çемьере арçын ача çуралсан ăна утьăкка сиктернĕ чух кашниех ăна сывлăх сунса салтак пулма сĕнет. Салтак вăл – мирлĕ пурнăç хӳтĕлевçи, малашлăх ĕмĕтсен шанчăкĕ. Çулсем иртнĕçемĕн, вăрçă вутçулăмĕсене чăтса ирттернĕ май, кашни салтак паттăрлăхĕ общественноç умне туллин тухать. Вăхăт иртсен çеç çав паттăрсен ячĕсем ăруран ăрава куçмаллине чунпа ăнланса илетпĕр. Эпир çакна чун хушнă пек тума пултаратпăр пулсан пирĕн ачасен чĕрисенче те паттăрлăх туйăмĕ иксĕлмĕ. Çакă сăмахпа мар, ĕçпе çирĕплентĕр тесе паян эпĕ хаçат вулакансене ĕнер кăна-ха Тинĕс Çар флотĕнче службăра тăнă, тинĕсри тăварлă шывпа пиçĕхсе паян та хăйсене шаннă ĕçшĕн яваплăха туякансем пирки сăмах пуçарас терĕм.

«Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн директорĕ А. Куликов патĕнче Çĕмĕрлери районсем хушшинчи телекоммуникаци узелĕн пуçлăхне С. Ермолаева тĕл пултăм. Пĕрремĕш кун мар пĕлетĕп çак арçынсене, анчах... Александр Николаевичпа Сергей Николаевич ФСК директорĕ флотран туса таврăннă фотоальбома кăмăллă аса илӳсемпе пăхса ларнине курсан ман пĕлĕшсем иккĕшĕ те действительнăй çар службине Тинĕс Çар флотĕнче ирттернине ăнлантăм. Муркаш каччисем çĕр-шыв умĕнчи таса тивĕçе пурнăçласа инçетри тинĕс-океан хумĕсене касса çӳрени пирĕн патриотизмла калаçăвăн вутне ӳстерчĕ кăна.

– Чылай хушă «Моргаушская» ПМКра тĕп инженерта ĕçленĕ атте, Николай Зосимович, Андрей шăллăмпа иксĕмĕре ачаллах чăн-чăн арçын пек хастар та тĕреклĕ пулма вĕрентетчĕ. Хăй Камчаткăра службăра тăни пирки каласа панисем пирĕншĕн чи кĕтнĕ калаçусемччĕ. Анчах ачалăхра пахча хыçĕнчи пĕчĕк пĕверен пысăкраххине курманран ӳссе çитсен хам моряк пулăп тесе ĕмĕтленмен те. Пурнăç вара йăлтах урăхла çавăрса кăларчĕ, – аса илӳ çăмхине салтрĕ Сергей Николаевич. Салтака ăсатнă чух амăшĕ, Маргарита Максимовна, 1 метр та 56 см çӳллĕш ывăлĕ моряк пулать тесе шӳтлени Сергей Канаша çитсенех пурнăçа кĕме пуçлать. Çапла çав, чĕлхе çине килни ума тăрать.

Североморск хулине çитсен пĕрремĕш пысăк карапа курсан хăй епле тĕлĕннине С. Ермолаев паян та пытараймасть. «Кунашкал карапсем вăл вăхăтра сахалччĕ, анчах манăн шăпах çавнашкаллисем çинче службăра тăма тиврĕ», – альбом çинчи крейсер сăн ӳкерчĕкĕ çине тĕллесе калаçать Сергей Николаевич. Карап çине матрос пулса ура ярса пуснă пирĕн ентеш икĕ çултан тăван киле 1-мĕш статья старшини пулса таврăнать.

– Мĕн пачĕ-ха сире флот? – ыйтатăп сăн ӳкерчĕксем пăхса ларнă май сăн-питрен ăшă кулă вĕçертмен юлташсенчен. Сергей Николаевичпа Александр Николаевич иккĕшĕ те пӳрне хуçса шутласа кайрĕç. «Нумай шутлаççĕ», – мĕлтлетрĕ шухăш. Анчах хурав чăн-чăн морякла пулчĕ:

– Флотри служба ответлăха туйма, юлташ хул пуççине тата команда вăйне туйма, пурнăçлама çук задачăсем пулманнине вĕрентрĕ. Тăрăшмалла кăна.

Службăна кайиччен çыхăну техникумне ăнăçлă пĕтернĕ Сергей флотран таврăнсан Муркашра «ВолгаТелеком» акционер обществинче монтер пулса ĕçлеме пуçлать. Ответлăха туякан çамрăк кунта та професси çулĕпе хăвăрт малалла каять.

– Морякăн чи юратнă çимĕçĕ мĕн-ха тата асрах-и вăл? – ыйтатăп калаçава малалла тăсса. Кунта А. Куликов калаçава хутшăнчĕ.

– Флотри макарона çитекенни çук! Пĕçернĕскерне какай фаршĕпе хутăштараççĕ те – çисе тăранаймастăн. Типĕтнĕ пахча çимĕçрен пĕçернĕ апат катара тăтăр. Хам Хура тинĕс флотĕнче службăра пулнă пулсан та, Муркашри апат-çимĕç комбинатĕнче хатĕрленĕ типĕтнĕ пахча çимĕç те лекетчĕ. Тăван ял сывлăшĕ пырса кĕнĕнех туйăнатчĕ çав самантсенче, – аса илчĕ вăл хăй 1988-1990 çулсенче Тинĕс Çар флотĕнче службăра пулнă вăхăта.

Тинĕс авиацийĕнче службăра тăнă пирĕн ентеш 2 çул хушшинче 3 хутчен вăрăм походсенче пулнă: Хура тинĕсре, Атлантика тата Инди океанĕсенче. Лăпкă океан хумĕсене те пĕр миль çеç касман. Чи вăрăм поход 3 уйăха тăсăлнă. Унтан таврăнсан умри тивĕçĕсене туллин пурнăçланăшăн 7 моряк хушшинче А. Куликов старшинана та «Флота шанчăклă пулнишĕн» Ушаков адмирал медалĕпе наградăланă.

– Салтак кайиччен моряк формиллĕ арçынсем çине ăмсанса пăхаттăм. Хамăн вара сывлăш-çар десантникĕ пулас килетчĕ. Анчах çĕр-шыв мана флотра усăллăрах пулатăн терĕ курăнать. Паян Тинĕс Çар флочĕ – манăн пурнăç. Унта службăра пулнисемпе, çĕр-шыв умĕнчи тивĕçе океанра пурнăçланисемпе паян эпир тачă çыхăну тытатпăр, пĕр-пĕрне пулăшма тăрăшатпăр, – терĕ «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн бассейнĕнче шыва кĕрекенсем çине ăшшăн пăхса илсе Александр Николаевич. Унăн ывăлĕ паян Пермьри çар юрисчĕсем хатĕрлекен институт курсанчĕ пулнăран Куликовсен çар династийĕ малалла тăсăлни курăнать.

Çамрăксем хăйсен çĕр-шыв умĕнчи тивĕçне манăн паянхи пĕлĕшĕмсем пек ответлă пурнăçласан, присягăна шанчăклă пулсан, çĕр-шыв малашлăхне çирĕп алăра теме пулать. Салтак вутра пиçĕхсен, шывра тасалсан, çил çинче кушăрхасан, шартлама сивĕре уçăлсан кăна çĕр-шывăн паттăр хӳтĕлевçи пулса тăрать тени пĕлтерĕшне çухатман. Çухатмĕ те.

Анатолий БЕЛОВ.

Сăн ӳкерчĕкре: С.Н. Ермолаевпа А.Н. Куликов флотри службăна аса илсе лараççĕ.

Манах саккуна пăснă

Суд залĕнчен

Паян çакна çирĕплетсех калама пулать. Инкек вара ку хутĕнче те «симĕс çĕлен» тыткăнĕнче тымар янă. 2010 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнче иртнĕ Муркаш район сучĕ пулни-иртни çине тулли хурав парса айăплă шутланакан тĕлĕшпе тивĕçлĕ приговор кăларнă. Ĕç-пуç вара суд алăкĕ патне çапла аталанса çитнĕ.

Тин çеç 28 çул тултарнă çамрăк манах пурнăçĕнче канлĕх тупма шутланă. Çапла вара Чăваш Республикинчи Канаш район сучĕн 2006 çулхи чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕнчи приговорĕпе виçĕ çул кирпĕч шутласа тухсан Павел Горинов Каршлăхри Александр Невский ячĕллĕ арçынсен мăнастирне послушник пулса вырнаçать. Хăйĕн ку таранччěнхи çылăхĕсенчен кĕлĕсемпе тасалма шутлать хайхискер. Анчах... Турра ĕненессипе эрех ĕçесси тӳр килмеççĕ çав.

Мăнастир ытамĕнче канлĕх шыранă арçын вăрман сулхăнĕнче те симĕс шĕвек тыткăнĕнчен сирĕлеймен. Аншарли «вăй панипе» Канаш каччи мăнастирте пĕрле пурăнакан Р. Беловпа хирĕçсе каять. П. Горинов пĕрле пурăнакан послушникпе хăйĕн хушшинчи сăмахпа татса парайман ыйтăва çĕçĕ пулăшăвĕпе ансатлатма шутлать. Хăй саккуна пăснине пĕлсе тăрсах тата Р. Беловăн сывлăхне сиен кӳрес тесех Павел ĕнер çеç кĕлĕре пĕрле тăнă послушнике хăйĕн çумĕнче пулнă кухня çĕççипе 8 хутчен чикет.

Йĕрке пăсас çул çине тăнă арçын судра хăйĕн айăпне пĕтĕмпех йышăнчĕ. Район сучĕ П. Горинова Раççей Федерацийĕн Уголовнăй кодексĕн 111 статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступление тунă тесе айăпларĕ. Приговорпа килĕшӳллĕн вара район сучĕ Павел Владимировича çирĕп режимлă колонире виçĕ çул ирĕкрен хăтармалла йышăнчĕ. Кунпа пĕрлех унăн Р. Белова сыватма кайнă 2711 тенкĕ укçана 2-мĕш номерлĕ Муркаш район больницине саплаштарма тивет.

И. ВАСЮХИН,
следстви пайĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыракан.

Кулса илер

Салтаксен пурнăçĕнчен

Сывлăш-çар десанчĕсен вĕрентĕвĕ иртнĕ. Десантниксем пĕрле пуçтарăнсан генерал пĕтĕмлетӳ тăвать:

– Вĕрентĕве 100 десантник хутшăнчĕ пулсан çĕр çине 97 салтак чиперех анчĕ. Çухатусем çук.

Çакна итлесе тăракан журналист чăтаймасть:

– Епле çук? Тепĕр виççĕшĕ ăçта вара? Кун пирки халăха мĕнле пĕлтермелле?

– Пăшăрханма кирлĕ мар, экипаж сикме тăхтанине ăнланма пулать.

***

Рота командирĕ стройри салтаксем умĕнче.

– Иванов рядовой! Эсир тăшман тапăннă чух хăранинчен епле пăрăнмаллине, ăçта пытанмаллине пĕлетĕр-и?

– Çапла, пĕлетĕп. Тăшман çине тепĕр хут пăхса илмелле!

ОАО «ГАЗПРОМ» ФИЛИАЛ ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород»

ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ

УВЕДОМЛЕНИЕ

ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ УВЕДОМЛЯЕТ юридических и физических лиц, владеющих и обрабатывающих землю или (и) производящих работы в Моргаушском районе Чувашской Республики, что на территории Моргаушского района находятся магистральные газопроводы (МГ) и газопроводы-отводы (далее по тексту - газопроводы), эксплуатируемые под рабочим давлением до 75 кг/см^2. Глубина залегания газопроводов (от верхней поверхности трубопроводов) составляет не мене 0,8 метров.

«Правилами охраны магистральных трубопроводов», утв. ГГТН РФ 24.04.92г. (внесены дополнения 23.11.94 г), в целях обеспечения нормальных условий эксплуатации и исключения возможности повреждения газопроводов устанавливаются охранные зоны по 25 м (по суше) и 100 м (для подводных переходов) в обе стороны от оси любого газопровода.

Минимальное расстояние от газопроводов до объектов различного назначения установлено на основании СНиП 2.05.06-85* и для находящихся на территории района газопроводов составляет от 100 метров до 350 метров.

В охранных зонах газопроводов запрещается производить всякого рода действия, могущие нарушить нормальную эксплуатацию трубопроводов, либо привести к их повреждению, в частности:

а) перемещать, засыпать и ломать опознавательные и сигнальные знаки, контрольно - измерительные пункты;

б) открывать люки, калитки и двери необслуживаемых усилительных пунктов кабельной связи, ограждений узлов линейной арматуры, станций катодной и дренажной защиты, линейных и смотровых колодцев и других линейных устройств, открывать и закрывать краны и задвижки, отключать или включать средства связи, энергоснабжения и телемеханики трубопроводов;

в) устраивать всякого рода свалки, выливать растворы кислот, солей и щелочей;

г) разрушать берегоукрепительные сооружения, водопропускные устройства, земляные и иные сооружения (устройства), предохраняющие трубопроводы от разрушения, а прилегающую территорию и окружающую местность - от аварийного разлива транспортируемой продукции;

д) бросать якоря, проходить с отданными якорями, цепями, лотами, волокушами и тралами, производить дноуглубительные и землечерпальные работы;

е) разводить огонь и размещать какие-либо открытые или закрытые источники огня.

В охранных зонах трубопроводов без письменного разрешения предприятий трубопроводного транспорта запрещается:

а) высаживать деревья и кустарники всех видов, складировать корма, удобрения, материалы, сено и солому, располагать коновязи, содержать скот, выделять рыбопромысловые участки, производить добычу рыбы, а также водных животных и растений, устраивать водопои, производить колку и заготовку льда;

б) сооружать проезды и переезды через трассы трубопроводов, устраивать стоянки автомобильного транспорта, тракторов и механизмов, размещать сады и огороды;

в) производить мелиоративные земляные работы, сооружать оросительные и осушительные системы;

г) производить всякого рода открытые и подземные, горные, строительные, монтажные и взрывные работы, планировку грунта.

Письменное разрешение на производство взрывных работ в охранных зонах трубопроводов выдается только после представления предприятием, производящим эти работы, соответствующих материалов, предусмотренных действующими Едиными правилами безопасности при взрывных работах;

д) производить геологосъемочные, геолого - разведочные, поисковые, геодезические и другие изыскательские работы, связанные с устройством скважин, шурфов и взятием проб грунта (кроме почвенных образцов).

Владельцы земельных участков не могут строить какие бы то ни было здания, строения, сооружения в пределах установленных минимальных расстояний до объектов системы газоснабжения; такие владельцы не имеют права чинить препятствия организации - собственнику системы газоснабжения или уполномоченной ею организации в выполнении ими работ по обслуживанию и ремонту объектов системы газоснабжения, ликвидации последствий возникших на них аварий, катастроф. (ФЗ от 31.03.1999 г. № 69-ФЗ «О газоснабжении в РФ»).

Органы исполнительной власти и должностные лица, граждане, виновные в нарушении правил охраны магистральных трубопроводов, газораспределительных сетей и других объектов систем газоснабжения, строительстве зданий, строений и сооружений без соблюдения безопасных расстояний до объектов систем газоснабжения или в умышленном блокировании либо повреждении, иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действиях, несут ответственность в соответствии с законодательством Российской Федерации.

Здания, строения и сооружения, построенные ближе установленных строительными нормами и правилами минимальных расстояний до объектов систем газоснабжения, подлежат сносу за счёт средств лиц допустивших нарушения.

Материальный ущерб, нанесённый организации – собственнику системы газоснабжения в результате умышленного её блокирования или повреждения либо иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действий, возмещается в установленном порядке виновными лицами или принявшими противоправные решения лицами.

При рассмотрении соответствующими органами ходатайства о предоставлении земельных участков для указанных целей место расположения объектов строительства должно предварительно согласоваться с ЛПУМГ. Перед началом работ необходимо получить письменное разрешение Чебоксарского ЛПУМГ на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода. Производство работ без разрешения или по разрешению, срок действия которого истек, ЗАПРЕЩАЕТСЯ.

Получив разрешение на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода, необходимо до начала работ вызвать представителя Чебоксарского ЛПУМГ для установления точного местонахождения трубопровода, определения его технического состояния и взаиморасположения с сооружениями проектируемого (строящегося) объекта. В процессе строительства необходимо письменно за 5 суток до начала уведомить Чебоксарское ЛПУМГ о времени производства тех этапов работ, специально указанных в выданном разрешении при которых необходимо присутствие представителя Чебоксарского ЛПУМГ.

По всем вопросам, относительно производства земляных работ в зонах газопроводов, обращаться по адресу:

428027, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 25, Филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» – Чебоксарское ЛПУМГ, тел. 8-(835) - 30-54-09, 30-54-22.

«Мăшăр хўтĕлевçĕ пулнă, мăнук та»

Ыран – уяв

Сакăр вунă çулта пулин те Отарккă ялĕнче пурăнакан Мария Николаевна Данилова çивĕч те правур. Çулла пулсан хурсемпе, хурт-хăмăрпа аппаланать, хĕлле те алран ĕç ямасть.

Çак ялти каччăпа Иван Даниловичпа вĕсем 1955 çулта пĕрлешнĕ. Çичĕ ача çуратнă Мария Николаевна, анчах та кĕçĕннисенчен пĕрне (вĕсем йĕкĕреш пулнă) тăватă уйăхрах Турри каялла илнĕ. Ку, паллах, пурнăçри чи пысăк та манăçми суран. «Йывăрлăхне вара пайтах тўссе ирттернĕ, хурлăхсăр пурăнман. Хурлăхсăр пурăнсан çынна та паллайми пулатăн, хурлăх курсан çынна та яланах ăнланатăн», – тет кинемей. Шел, Владивостокра пурăннă Петĕр ывăлĕ те 38 çултах пурнăçран уйрăлнă. Ыттисем вара çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕсене саланнă.

Паян вара Мария Николаевна кĕçĕн хĕрĕпе Евдокийăпа тата Игорь мăнукĕпе пĕрле пурăнать. Игорь Раççей çарĕнче Ленинград облаçĕнче хĕсметре тăнă, контракт çырса тепĕр икĕ çуллăх унта юлнă. Мăнукĕн çак утăмне ырлать кукамăшĕ. «Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче пулнă, Германинче хĕсметре тăнă хыççăн 1950 çулта киле тавраннă кукашшĕне шута хунăн туйăнать. Çĕр-шыв хўтĕлевçин кунне мăнук та чăннипех хăйĕн уявĕ теме пултарать», – тет тăлăх арăм, пурнăçри ырă самантсемпе киленме пĕлекенскер.

Н. НИКОЛАЕВА
сăн ўкерчĕкĕ.

Ял çыннине тĕрлĕ «апат» кирлĕ

Пирĕн пата çыраççĕ

Февралĕн саккăрмĕшĕнче Кашмашри Культура çуртĕнче ял халăхĕ йышлă пухăнчĕ: художество пултарулăх ушкăнĕсен смотр-конкурсĕ-çке. Куракансем вара Ятмансен, Çурлатрисен, Кашмашсен пултарулăхĕпе киленме пултарчĕç кăна мар: кунта ал ĕç выставки те ĕçлерĕ, халăхпа тĕл пулса калаçма районти шалти ĕçсен пайĕнчен те килсе çитрĕç.

Пай пуçлăхĕ Е.И. Плечов район территорийĕнче, вăл шутра Çатракасси ял тăрăхĕнче те, йĕркене пăснин тĕлĕшпе лару-тăру мĕнлрех пулнипе паллаштарчĕ. Саккуна камсем ытларах пăсни çинчен кăна мар, вăл е ку лару-тăрура çынсен хăйсене мĕнле тытмаллине, харпăр хăйне мĕнле пулăшмаллине те ăнлантарса пачĕ.

Мартăн 1-мĕшĕнчен тытăнса «Полици çинчен» федераллă саккун вăя кĕрет. Калаçу çак çĕнĕлĕх тавра та пулчĕ. Ку саккун малашне йĕрке сыхлакан органсен ĕçне çирĕппĕнрех палăртать: вĕсем пĕрпĕрин ĕçне тумĕç. Саккун тăрăх шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем аттестаци тĕрĕслевĕ витĕр те тухĕç. Коррупцие тата преступленисене хирĕç кĕрешесси хальхи пекех пĕлтерĕшлĕ тĕллевсенчен пĕри пулса юлать. Çĕнĕ саккун сотрудниксене эффективлă ĕçлеме пысăкрах майсем туса парать: вĕсен прависемпе тивĕçĕсем çинчен унта туллин çырса панă.

Саккунта палăртнипе полиципе общество хушшинче тачă çыхăну йĕркеленмелле. Хальлĕхе вара реформа пынă май районти шалти ĕçсен пайĕнче штат татах та чакасси паллă. Анчах та тивĕçсен калăпăшĕ чакмасть. Çакна шута илсе ял çыннисен хăйсен те милици сотрудникĕсемпе тачă çыхăну тытсан аван. Çапла вара хамăра пулăшас ĕçе те лайăх витĕм кўме пултаратпăр. Апла йĕркелĕх тĕлĕшпе çитменлĕхсем асăрхасан милиция шăнкăравлама е кĕрсе тухма ўркенмелле мар. Преступление çийĕнчех уçса парасси çакăнтан та нумай килнине аса илтерчĕ Евгений Иванович.

Районти çулсем çинче аварисем сахал мар пулса иртеççĕ. ГИБДД инспекторĕ С. Иванов хăрушă инкексене аса илсе цифрăсемпе паллаштарчĕ. Çул çинче пурне те тимлĕ пулма ыйтнипе пĕрлех ашшĕамăшĕсене те, учительсене те ачасене хăрушсăрлăх пирки тăтăшах аса илтермеллине каларĕ вăл.

Çатракасси ял тăрăхĕнчи милицин участокри уполномоченнăйĕ В. Бирюков ял тăрăхĕнче тăракан çивĕч ыйтусенчен пĕрне хускатрĕ: çамрăксем çар ретне тăрассинчен пăрăнса тарса çўрени пăшăрхантарать. «Таркăнсем» пирки çитес вăхăтрах тивĕçлĕ мерăсем йышăнассине пĕлтерсе общество енчен çамрăксене тимлĕх ытларах кирлине палăртрĕ.

Хамăрăн хăрушсăрлăх çўллĕрех шайра пуласси апла хамăрăн алăрах. Çакна кашни çыннăн ăнланмалла.

Ял халăхĕшĕн усăллă калаçу хыççăн пурте юрăташă курса хавасланчĕç. Кăмăл хăпарчĕ.

И. МАЙКОВ.

Сывă пурнăç йĕркишĕн

Ăмăртупа çамрăксем кăмăллă

Спорт пирĕн пурнăçра паллă вырăн йышăнать. Çакна ăнланакансем вара спортăн тĕрлĕ енĕпе çывăхланса ўт-пĕве çирĕплетеççĕ. Акă февралĕн 11-мĕшĕнче Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлў паракан тĕп шкулăн спортзалĕнче спорт тусĕсем йышлăн пухăнчĕç. Ăна валли сăлтавĕ те пулчĕ: волейбол вăйăин ветеранĕн Георгий Егорович Лукинăн куçса çўрекен кубокне тата парнисене çĕнсе илессишĕн волейбол ăмăртăвĕ иртрĕ. Кăçалхипе вăл тăваттăмĕш хут пулчĕ.

Йыхрава спортăн 60 тусĕ хапăл туса йышăнчĕ. Пĕтĕмпе вара 6 команда вăй виçрĕ, вăйлисене палăртрĕ. Ăмăрту тĕрлĕ номинацисенче иртни те выляканскене хавхалантарчĕ. Командăсем ăмăртăва тивĕçлипех хатĕрленни хĕрў кĕрешўсенче курăнчĕ. Пĕрремĕш вырăна тата куçса çўрекен кубока Оринин шкулĕ тивĕçрĕ. «Сендрух» тата Чуманкасси волейбол командисем иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайларĕç. Çĕнтерўçĕсене ăмăрту йĕркелўçи асăнмалăх парнесем, дипломсем парса чысларĕ. Çитес вăхăтра спорт тусĕсем волейбол вăйăинче вăй виçме Куславкка районне çитме палăртаççĕ.

Ăмăрту йĕркелўçи пирки кĕскен палăртса хăварсан та ытлашши пулмĕ. Георгий Егорович волейбол енĕпе 1-мĕш категориллĕ судья, çар кĕрешĕвĕпе – спорт мастерĕн кандидачĕ. Волейбол ăмăртăвĕнче вăй виçме вара спортăн пысăк тусĕ чылай çĕре çитнĕ, республика тулашĕнче те сахал мар пулнă. 1962 çулта Сосновкăри шкултан вĕренсе тухнă. Халĕ вара кунтах волейбол ăсталăхне вĕрентет.

– Пире валли Георгий Егорович волейбол ăмăртăвĕ тата секцийĕ йĕркеленĕшĕн эпир, çамрăксем, питĕ савăнатпăр. Пушă вăхăт усăллă иртни пуриншĕн те лайăх, – терĕ Костя Никифоров ăста йĕркелўçĕне тав туса.

Февраль уйăхĕнче Г.Е. Лукинăн çуралнă кунĕ пулчĕ. Эпир вара ăна çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, ăмăртусенче малашне те пысăк çитĕнўсем тума сунатпăр.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Спорт

Анисимов парнисемшĕн

Февралĕн 19-мĕшĕнче Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлў паракан тĕп шкулăн спортзалĕнче Совет Союзĕн Геройĕн Яков Анисимович Анисимовăн парнисене çĕнсе илессишĕн спорт ăмăртăвĕ иртрĕ.

Ăмăртăва интереслĕ те хавхалантаруллă йĕркеленме Я.А. Анисимов мăнукĕ В.Г. Вальков, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертўçи тата Муркаш район пуçлăхĕ И.В. Николаев, Уйкас Янасал ял тăрăхĕн администрацийĕ спонсор пулăшăвĕ уйăрчĕç. Спорт тусĕсем кире пуканĕ йăтассинче, шашка, волейбол вăйăисенче вăй виçрĕç. Пĕтĕмпе вара тăватă команда хутшăнчĕ.

Волейбол ăмăртăвĕнче пĕрремĕш вырăна «Сендрух» команда тухрĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене ветерансен (район пуçлăхĕ И.В. Николаев хутшăнакан команда) тата Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлў паракан тĕп шкулăн командисем пайларĕç. Шашка вăйăин ăмăртăвĕнче А.М. Максимов чи маттурри пулчĕ. Кире пуканĕ йăтассипе К.Н. Васильева çитекенни пулмарĕ.

Пĕтĕмĕшле ăмăртура «Сендрух» команда пĕрремĕш вырăна тухса куçса çўрекен кубок çĕнсе илчĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене ветерансен тата Уйкас Апаш ялĕн командисем пайларĕç. Пурте вĕсем асăнмалăх парнесемпе дипломсене тивĕçрĕç.

С. НИКИФОРОВА.

Пĕлтерўсем. Объявления

25 февраля в РДК состоится продажа обуви из натуральной кожи Ульяновской и Белорусской фабрик. Пенсионерам – скидка. Время работы: с 9 до 17 часов. Распродажа трикотажных изделий г. Чебоксары.

* * *

Ĕне, вăкăр, пăру туянатăп. Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 2-5.

ЗАО «Чебоксарское предприятие «Сеспель» срочно требуется слесарь по ремонту станочного оборудования с гидросистемой, с опытом работы. Оплата высокая. Обращаться по телефону: 8-903-358-69-83. 2-3.

* * *

НО «ФОНД «ВОЗРОЖДЕНИЕ ХРАМОВ»

Продает настенные православные календари (формат А-3, св. Николай) от 5 рублей; бесплатное страхование от несчастных случаев на 10 тыс. руб. через страховые компании. Адрес: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 2. Тел.: 8-905-342-11-50. 5-7.

* * *

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.

* * *

Куплю корову. Дорого. Тел.: 8-905-343-15-48. Куплю бычков, телок, КРС. Дорого. Тел.: 8-927-997-21-48. 3-4.

* * *

Продаем сено. Доставка бесплатно. Тел.: 8-919-679-18-11, 8-927-859-91-55. 2-2.



Муркаш районĕнчи «Çĕнтерў ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:

Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.

ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерў ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.

Рекламăпа пĕлтерўсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 21.02.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4305.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерў ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.